ПАЯН Н.В.НИКОЛЬСКИЙ ÇУРАЛНĂРАНПА 129 ÇУЛ ÇИТРĔ

# УЛĂПСЕН ĂРАСКАЛĔ



ВĂЛ никĕсленĕ "Хыпар" хаçат, унăн таса та сăваплă ятне совет саманинчи килпетсĕр манăçлăхран кăларнă хыççăн палламалла мар чиперленнĕ Купăрля ялĕ, унти парк, бюст, стелла, Ваçкассинчи ун ячĕллĕ шкулти чаплă музей, Хусанти Ар масарĕнчи гранит палăк, Шупашкарти анлă проспект, педагогика колледжĕ, унăн пурнăçне, ĕç-хĕлне тĕпчесе çырнă çĕр-çĕр статья, унăн ăслăлăх еткерĕнчи 200 ытла томри чи паллă ĕçсене пичетлесе кăларнă 2 том /пурĕ 4 пулмалла/, ун ячĕллĕ стипендисем... Ку пĕтĕмпех – Николай Васильевич Никольский: Атăлçи-Урал халăхĕсен тĕпчевçи, историк, этнограф, фольклорист, лексикограф, чĕлхеçĕ, кусарусçă, халăх медицинин чаплă пĕлӳçи, редактор-издатель, музыка тĕпчевçи, статистик, экономист, педагог, аслă шкулсен йĕркелӳçи, чăвашпа ытти "вак" халăхсен наци-ирĕклĕх юхăмĕн çул пусĕсенчен пĕри, общество-политика ĕçченĕ /1917 çулхи çĕртме уйăхĕнчен пусласа 1918 çулхи утă уйăхĕччен Хусан кĕпĕрне земство управине ертсе пынă/.

"Эпĕ нихăçан та кахал пулман", – пурнăçĕн юлашки çаврăмĕнче калалă çак сăмахсем хăйне кашни вакăтĕвекшĕн тиркеме хăнăхнă çыншăн сăпайсăртарах илтĕнеççĕ-тĕр, анчах пире паян Никольский чăваш улăпĕсенчен пĕри пулни кăштах та иккĕлентермест. "Пулни" тетĕп те – ку сăмах тĕрĕс маррине хирĕçлеме тивет. Улăпсем вилмеççĕ, вĕсен пархатарĕ пире çул кăтартса пырать: тĕрĕс марлăхран, ăмсанукĕвĕçӳрен, курайманлăхран сыхланма-пăрăнма, халăхăмăршăн пĕтĕм вăя, ăс-хакăла хурса ĕçлеме. Вилес умĕн Николай Васильевич тĕлĕкĕнче хăйне çĕр чăмăрне аллипе портфель тытса тăракан çын пек курнă. Тĕнче улăпĕ – Çĕр – Этем. Петĕр Хусанкайăн вĕрентекенне халалланă /1958 ç./ сонечĕн çак йĕркисене паян кам хирĕçлейĕ: "Мĕн пур тăван çĕршывăм тăрăх // Янрать чăваш ăс-хакĕ хурçăн. // Эппин – шăтрех, сая каймарĕ// Эсир акса хăварнă вăрлăх. // Тавсси, профессор! Тайăл, пуçăм!"

Иртнĕ ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсен пуçламăшĕнче ăна юратнă ĕçĕнчен вăйпа пăрнă, анчах вăл çав-çавах ырмиканми ĕçленĕ. Чăваш Республикинче ăна ĕç паман, юрать-ха çармăссем ăслăлăх тĕпчев институтне вырнаçтарнă. Пур пĕрех вăтăр çула яхăн пĕр монографи те кăларттарман. Унăн пурнăçне хăйне чӳке панă çын пурнăçĕпе танлаштармалла-тăр. Никольский çуркунне, тĕнче чĕрĕлнĕ тапхăрта çуралнă. Акаçă вăхăчĕ. Профессорăмăр мĕн акнин тухăçĕ – пархатарлă, тулăх, тупăшлă. Вăл чӳк уйăхĕнче çĕре кĕнĕ. *Çур[ал]* тата *чӳк*. Мĕнешкел символсем! Улăпсен ăраскалĕ çапла-тăр...

**Алексей ЛЕОНТЬЕВ**

* * *

*Паян Муркаш районĕнчи Купăрляра, йăлана кĕнĕ йĕркепе, – Н.В.Никольский çуралнă кун ячĕпе уяв. Шомикре вара "Хыпар" хаçат парнисемшĕн кросс ăмăртăвĕ иртет.*